***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2021/2022 учебный год. 7 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Вĕрене* – клен, *ăвăс* – осина, *шĕшкĕ* – орешник, *палан* – калина, *улмуççи* – яблоня.

**Кашни тупнă сăмахшăн – 0,5-шер балл, вырăсла куçарнăшăн – 0,5-шер балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. *Хĕрел* – краснеть (алеть), *хăмăрлан* – становиться коричневым, буреть, *сарал* – желтеть, *сарăх* – желтеть, *кĕренлен* – розоветь.

**Кашни тупнă сăмахшăн – 0,5-шер балл, вырăсла куçарнăшăн – 0,5-шер балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Пĕлĕтсем* – облака.

**Тупнăшăн – 3 балл, вырăсла куçарнăшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. *Темрен хăранă кайăксем пек*

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

5. *Уй-хир*.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл. (*Час-часах, сап-сарă* сăмахсене çырсан 1-ер балл чакармалла).**

6. *Кĕр мăнтăр, çур ырхан.*

*Кĕр пуйтарать, çур çухатать.*

*Кĕркунне какай, çуркунне серте тутлă.*

*Кĕркунне çерçи те пуян.*

*Кĕрпе кĕрĕк тăхăн, çурпа – сăхман.*

**Кашни ваттисен сăмахĕшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Састаш (рифма) – сăвă çаври вĕçĕнче сасăсем пĕр евĕрлĕ вĕçленни.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. Юмах – юман.

**Кашни тĕрĕс сăмахшăн– 2,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

9. Нарспи, Тăхтаман, Сетнер, Сентти, Михетер, Сетнер амăшĕ **...**

**Кашни ятшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысăк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2021/2022 учебный год. 8 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. Текста юмах жанрĕпе хайланă. Уйăхсем кунта – сăнарсем, çавăнпа вĕсен ячĕсене пысăкран çырнă.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

2. Январь – кăрлач, февраль – нарăс, март – пуш, апрель – ака, май – çу, июнь – çĕртме, июль – утă, август – çурла, сентябрь – авăн, ноябрь – чӳк, декабрь – раштав.

**Пурне те тĕрĕс куçарсан – 5 балл, 1-2 йăнăш пулсан – 4 балл, 3-4 йăнăш пулсан – 3 балл, 5-6 йăнăш пулсан – 2 балл, 7-11 йăнăш пулсан – 1 балл, 12 йăнăш пулсан – 0 балл.**

3. Улма-çырла, сĕт-çу, апат-çимĕç, тырă-пулă, çăкăр-тăвар.

**Кашни мăшăр сăмахшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл. Кашни йăнăш хуравшăн 1-ер балл чакать.**

4. *Икĕ* сăмахра пĕр *к* çырмалла, мĕншĕн тесен ку предложенире хисеп ячĕ япала ятне ăнлантарать, япала шутне палăртать.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

5. *Çĕнĕ тырăран пĕçернĕ çăкăр.*

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

6. *Кĕрхи калчана кĕлете кĕртеймĕн.*

*Кĕрхи кун кĕлтеллĕ, çурхи кун çеçкеллĕ.*

*Кĕркунне куракăн та кĕркеи пуян.*

*Кĕр мăнтăр, çур ырхан.*

*Кĕр пуçтарать, çур салатать.*

**Кашни ваттисен сăмахĕшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Мăшăр рифма – юнашар вырнаçнă йĕркесем пĕр пек вĕçленни.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. *Ывăл – ывăс*

**Кашни тĕрĕс сăмахшăн– 2,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

9. „Икĕ хĕр“

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

10. **Чи пысăк хаклав – 5 балл.**

***Критерии оценивания и ответы*** *к заданиям муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе 2021/2022 учебный год. 9 класс*

*Максимальный балл – 50*

1. *Шăши* – мышь, *çара çерçи* – летучая мышь, *тăмана* – сова, *ула такка* – дятел, *каюра* – крот.

**Кашни тупнă сăмахшăн – 0,5-шер балл, вырăсла куçарнăшăн – 0,5-шер балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.**

2. *Тискер кайăксемпе, вĕçен кайăксем, пылчăк.* Тискер кайăксем тата вĕçен кайăксем – сăмах майлашăвĕсем, сăмах майлашăвĕсене яланах уйрăм

çыраççĕ. Хытă сыпăкри *л* хупă сасă *ч* умĕнче çемçен илтĕнсен те çемçелĕх палли çырмалла мар (*пылчăк, вăлча*).

**Кашни йăнăшшăн – 1-ер балл, *тискер кайăксемпе, вĕçен кайăксем* сăмах майлашавĕсене мĕнле çырмаллине ăнлантарнăшăн – 1 балл, *пылчăк* сăмаха мĕнле çырмаллине ăнлантарнăшăн – 1 балл). Пĕтĕмпе – 5 балл.**

3. *Урасемпе, çунатсемпе, сăмсасемпе, шăлсемпе, чĕрнесемпе, хӳресемпе.* Союзсăр çыхăннă пирки пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă.

**Тупнăшăн – 3 балл, ăнлантарнăшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

4. Метафора.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

5. *Шăши çара çерçи пулса вĕçсе кайман-и?*(*-и* – ыйту татăкĕ)

*Мĕнле килсе выртнă-ха йĕкелсем кунта?*(*мĕнле* ыйту самахĕ)

**Тупнăшăн – 2-шер балл, ăнлантарнăшăн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

6. *Вăрман пек пуянни çук, уй пек асли çук.*

*Вăрмана вутă турттармаççĕ, çăла шыв ямаççĕ.*

*Йывăççине кура çимĕçĕ.*

*Улми йывăççинчен аякка ӳкмест.*

*Çамрăк хулă авăнать, ватă хулă хуçăлать.*

**Кашни ваттисен сăмахĕшĕн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

7. Прототип тесе чăн пурнăçри çынна калаççĕ, çыравçă унăн кун-çулĕн хăш-пĕр самантне, характерне пĕр-пĕр хайлаври персонажăн сăнарне калăпланă чухне тĕпе хурать.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

8. *Хум – тум.*

**Кашни тĕрĕс сăмахшăн– 2,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

9. Федор Павлов. Ылтăн хурт.

**Ячĕшĕн, хушамачĕшĕн – 2-шер балл. Сăвă ячĕшĕн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

10. **Чи пысăк хаклав – 5 балл.**